2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
9 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 150 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумаййи 55 балл пухма пулать

1. Нумай пăнчă вырăнне панă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарса лартăр: *алли, этемрен, пурттинчен, юман*. Пурĕ – 4 балл.
а. Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та … .
ă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме икĕ вăйлă … пур.
б. Икĕ савни пĕрлешсен, пуçне тайрĕ ват … .
в. Пĕтнĕ мĕскĕн Сетнер те усал вăрă … .

2.Мăшăр сăмахсене тĕрĕс çырăр, чăрăну паллисене кирлĕ çĕре лартса тухăр. Пурĕ – 6 балл.
Çапла иртрĕ пурăнăç
Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах
Ашшĕ амăш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă суйхăпах
Курчĕ çутă тĕнчене
Пӳлĕх турă пӳрнипе
Ӳсрĕ  пулчĕ сарă хĕр
Атте анне пăхнипе

3. *Уй шăшине мĕн пур çăткăн чĕр чун тытса çиме тăрăшать. Уйрăмах – юс, пăсара, тилĕ, çӳлевĕç. Тăманасем те, ула куракпа чакак та тапăнаççĕ. Пурăш вара йăвисене тустарать.* Чĕр чунсен ячĕсене вырăсла куçарăр. ***Те*** мĕнле пуплев пайĕ пулать-ши? Пĕтĕмпе – 7 балл.

4. *Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм, хирти сарă чечек пек. Сивĕ, хаяр хĕл иртет, каять йĕрсе, хурланса.*Панă предложенисенче танлаштару тата сăпатлантару тупăр. Глаголăн сăпатсăр формисене çырăр. Пĕтĕмпе – 4 балл.

5. *Кану, пăру, кĕрӳ, чĕнӳ* сăмахсене камăнлăх тата пару падежĕсенче лартăр. Пурĕ – 8 балл.

6. «Нарспи» поэмăри  авалхи чăваш ячĕсене çырса парăр.Поэмăна кам çырнă?  Ятсене çырнăшăн пĕтĕмпе 5 балл илсе пулать. Авторне палăртнăшăн – 1 балл. Пурĕ  – 6 балл.

7. «*Мухтав та пехил ĕмĕр-ĕмĕрне тарпа тăварланă ыраш çăкăрне»*. Çак сăмахсене калаканĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн– 3 балл.

8. Л.Агаковăн «Юманлăхра çапла пулнă» повеçĕ – детектив произведенийĕ. *Детектив* сăмах чăвашла мĕнле куçарăнать? Тĕрĕс хуравшăн– 4 балл.

9. Кун ячĕсене çырса парăр. Эрне йĕркине пăхăнса çырнăшăн – 3 балл.

10.  Хăвăр пĕлекен паллă чăваш çĕр ĕçченĕ çинчен çырăр. Тулли хуравшăн – 10 балл.